25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ОКТЯБРЬ
31
ШАМАТКУН
255 (6190) №

# Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

**Совет çĕршывĕнчи ĕççыннисем! Пурне те перекетлесси—вăрçă вăхăтĕнчи закон! Государство средствисене перекетлĕн расходлăр, топливăна, чĕртавара, электроэнергие перекетлĕр!**

*(Октябрьти социализмлă Аслă революци XXV çул тултарнă тĕле ЦК ВКП(б) кăларнă лозунгсенчен).*

## Кашни предприятирех стахановла шкулсем пулччăр

Тăшмана тăван çĕршывран хăваласа кăларса пĕтерсе тăкас тĕллевпе ĕçлесе, пирĕн промышленноçпа транспортри работниксем ытларах та ытларах хĕçпăшалсем, боеприпассем туса кăлараççĕ. Рабочисемпе работницăсен производствăри ĕçĕн ăнăçлăхĕ вĕсем техникăна мĕн таран вĕренсе алла çавăрса илнинчен, вăхăтпа туллин усă курма пултарнинчен тата ĕçри çитменлĕхсемпе кăлтăксене хăвăрт сирме пĕлнинчен килет. Хăйĕн ĕçне питех те ăста пĕлекен рабочи çеç стахановла тухăçлăхпа ĕçлеме, лайăх пахалăхлă продукци пама пултарать.

Пирĕн фабрикăсемпе заводсенчи йышлă ĕç çарĕнчен пĕр пайĕ юратнă тăван çĕршыва сыхлама кайрĕ. Фронта кайнă рабочисем вырăнне вĕсен арăмĕсем, шăллĕ-йăмăкĕсем, ывăл-хĕрĕсем тăчĕç, пирĕн предприятисенче рабочисен çĕнĕ йышĕ хутшăнчĕ.

Çамрăк рабочисем—промышленноçпа транспортăн малашлăхĕ, халăх хуçалăхне малалла аталантарса пымалли вăй. Анчах çак вăйпа тĕрĕс усă курма пĕлес пулать, çамрăксене фабрикăпа завод ĕçне хăвăрт тата лайăх вĕрентсе çитĕнтерес пулать.

Производствăна юлашки вăхăтра пынă юлташсене вĕрентмелли майсем нумай. Çамрăка квалификациллĕ рабочи, стахановец тата мастер çумне çирĕплетни, техминимум кружокне явăçтарни, стахановла шкула çÿретни тата ытти те—çаксем ĕнтĕ рабочисен çĕнĕ йышне производствăна вĕрентмелли майсем пулса тăраççĕ.

Предприятине халĕ анчах кĕнĕ çамрăка уйрăм кадровик çумне çирĕплетсе вĕрентме тытăнас пулать. Кадровик ăна унăн пулас профессийĕпе паллаштарать, ĕçре харпăрхăйне мĕнле тыткаламаллине тата инкек-синкекрен сыхланма вĕрентет. Унтан вара станоксемпе усă курма, инструментсене хăйрама, продукци туса кăларма, хăйĕн ĕç вырăнне таса та йĕркеллĕ тытма вĕрентсе пырать. Ку вăл пулас рабочие станок умĕнче, ĕç патĕнче вĕрентсе хатĕрлени пулать. Унсăр пуçне ăна теориллĕ пĕлÿ пама кирлине манма юрамасть. Теориллĕ пĕлÿ пани рабочие ĕçре пултарулăрах та хăюллăрах пулма, практикăллă ыйтусене ăнăçлăрах татса пама пулăшать.

Кунсăр пуçне рабочие техникăн никĕсне вĕренмелли кружока — техминимум кружокне явăçтарас пулать. Çапла туни рабочисене пĕрерĕн мар, нумайшарăн хатĕрлеме май парать. Техминимум кружокне вунă е ытларах та çамрăк çÿреме пултарать. Теориллĕ пĕлÿ парас шутпа вĕсене унта докладсем туса, лекцисем вуласа памалла, чи опытлă стахановецсем хăйсен тухăçлă ĕçĕн «секречĕсемпе» паллаштарма пултараççĕ. Теориллĕ курса, паллах, малтан палăртнă йĕрке тăрăх вĕрентсе пымалла. Уйрăмах ĕç чертежĕсене вулама, детальсене тĕрĕс виçме, металсен составĕпе свойствисене пĕлме, техникăллă процессемпе операцисене мĕнле ертсе пымаллине анлăн вĕрентмелле.

Техминимум кружокĕнче ĕç техникин минимумне вĕрентсе çитерсен, çамрăк рабочисене темиçе çынран тăракан производствăллă группăна пĕтĕçтермелле. Производствăллă группăна ертсе пыма опытлă стахановецсене, квалификациллĕ рабочисене тата мастерсене хушмалла. Вĕсен çамрăк рабочисемпе работницăсене, вĕсем тăвакан ĕçе пĕтĕм анлăшĕпе вĕрентсе пымалла. Çавăн пек вĕренĕве вĕçлесен рабочисем техминимум пĕлĕвĕпе испытани тытма тата производствăра ĕçлесе кăтартма тивĕçлĕ.

Çамрăксене уйрăм мастерсем çумне çирĕплетсе тата техминимум кружокĕсене явăçтарса пирĕн республикăри чылай предприятисенче ăнăçлăн вĕрентеççĕ. Улатăр станцийĕн деповĕнче çавăн пек кĕске вăхăтрах 10 слесарь, 5 токарь, паровозсем юсакан заводра çĕр ытла çамрăк рабочисене тĕрлĕрен профессисене вĕрентсе хатĕрленĕ.

Рабочисен çĕнĕ йышне хатĕрлемелли тата ку таранччен ĕçлекенсен квалификацине ÿстерсе пымалли лайăх май вăл—предприятисенчи стахановла шкулсем пулаççĕ. Стахановла шкул рабочисене пĕрерĕн мар, вуншарăн хатĕрлеме май парать, мĕншĕн тесен рабочисем унта техминимум кружокне çÿреничен чылай йышлăнрах çÿреме пултараççĕ. Çавăн пек шкулсене ертсе пыма чи пултаруллă стахановецсене тата уйрăм мастерсене, инженерсемпе техниксене те хушас пулать. Стахановец хăйĕн шкулне производствăра ĕçленĕ пекех юратса тата пултаруллăн ертсе пытăр, кунта вăл пысăк тухăçлăхпа мĕнле ĕçлемеллине, мĕнле майпа лайăхрах тата нумайрах продукци туса кăлармаллине сăмахпа каласа та, ĕçре кăтартса та вĕренттĕр.

Стахановла шкул рабочисене вăрçă вăхăтĕнчи пек хăвăрт та йышлăн хатĕрлеме, халиччен ĕçлекенсен производствăри пултарулăхне татах та ÿстерме пулăшать. Çавăнпа ăна промышленноçра та, транспортра та организацилеме кирлĕ, кашни предприятирех стахановла шкул пултăр.

Анчах çапла тунине пирĕн республикăри предприятисенче пуринче те курма çук-ха. Чылай фабрикăсемпе заводсенче, артельсемпе мастерскойсенче стахановла шкулсене пачах та организацилемен. Тĕслĕхрен, Çĕмĕрлери «Большевик» заводра çамрăк рабочисене уйрăм мастерсем çумне çирĕплетсе вĕрентеççĕ, анчах стахановла шкул организацилеме кирлине аса та илмеççĕ.

Çамрăк рабочисене стахановла шкулсем урлă хатĕрлес тĕлĕшпе хăшпĕр утăмсем тунине Канашри вагонсем юсакан заводра курма пулать. Кунта пурĕ 5 стахановла шкул ĕçлет. Уйрăмах инструментальнăй цехри мастер Петров юлташ ертсе пыракан шкул лайăхрах ĕçлет. Петров юлташ занятисене палăртнă вăхăтра тата интереслă иртерет, теориллĕ ыйтусене практикăпа çыхăнтарать.

Анчах заводри производство командирĕсен, партипе комсомол организацисен стахановла шкулсен хисепне ÿстермелле, вĕсене кашни цехра пекех организацилемелле.

Пирĕн промышленноçпа транспортри хуçалăх работникĕсем тата парти организацисем умĕнче рабочисен çĕнĕ йышне вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек вĕрентсе ÿстерес тĕлĕшпе калама çук пысăк задачăсем тăраççĕ. Вĕсен çак ĕçе çиелтен мар, куллен тата тимлĕн ертсе пымалла, стахановла шкулсене кашни предприятирех организацилемелле, шкулсенче занятисем мĕнле иртсе пынине тĕрĕслесе тămалла, кирлĕ пулсан практикăллă пулăшу памалла.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса тата Октябрьти социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнине тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленсе, пирĕн фабрикăсемпе заводсем рабочисен çĕнĕ кадрне хатĕрлес тĕлĕшпе çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. Кашни опытлă рабочин, стахановецăн тата производство командирĕн халĕ çав обязательствăсене пĕтĕмпех пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешес пулать.

## Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕнче

Республикăра кĕрхи çĕртме тăвас ĕç юлса пынине тата çанталăк часах сивĕтессине шута илсе, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ ноябрĕн 1-мĕшпе 7-мĕш хушшинче кĕрхи çĕртме туса пĕтерессишĕн фронтри пек ĕçлемелли эрне тесе пĕлтерет. Çак эрнере тăрăшса ĕçлесе, Октябрьти социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнине кĕрхи çĕртме туса пĕтернипе кĕтсе илмелле.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ районсенчи мĕнпур партипе совет активне халех колхозсене яма, коммунистсемпе комсомолецсене суха ĕçне мобилизацилеме, çак ĕçе мĕнпур лашасене кÿлĕнтерме, тракторсене ир пуçласа каçчченех ĕçлеттерме, кашни сухаçăна уйрăм участоксем пама, сухаçăсене вĕри апат çитермелле тума хушаççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ хушнă тăрăх, кашни трактористпа сухаçăна кулленхи ĕçсен задание памалла. Вĕсем çав задание мĕнле пурнăçласа пынине колхоз председателĕсемпе бригадирсен çирĕппĕн тĕрĕслесе тămалла.

## УЯВ ЯЧĔПЕ ИЛНĔ ОБЯЗАТЕЛЬСТВĂНА ТУЛТАРНĂ

Н-ски завод коллективĕ, уяв умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, октябрьти производство программине срокчен тултарма пулнăччĕ. Коллектив çак обязательствăна ăнăçлăн пурнăçларĕ: октябрьти программăна срокран виçĕ кун малтан тултарчĕ. Халĕ коллектив плана пур изделисем тăрăх та тултарассишĕн тата планран иртерсе продукци парассишĕн кĕрешет.

Уяв умĕнхи ăмăртура заводри цехсенчен Кинзбургский юлташ ертсе пыракан цех уйрăмах лайăх ĕçлерĕ. Октябрьти плана вăл паянхи кун тĕлне 110 процент тултарчĕ.

Просяк, Цфасман тата Крочек юлташсем ертсе пыракан цехсем те çак уйăхри ĕçсен планне срокран виç-тăватă кун малтан вĕçлерĕç.

## Совет Информаци Бюровĕнчен

### Октябрĕн 29-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Октябрĕн 29-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче, **Туапсерен** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата **Нальчик** районĕнче çапăçнă.

Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

Пирĕн карапсем Балтика тинĕсĕнче нимĕçсен 15.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Октябрĕн 28-мĕшĕнче пирĕн авиаци фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 15 танкĕпе бронемашинине тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 130 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă, боеприпассен склачĕпе горючи складне сирпĕнтерсе янă, артиллерин 8 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине икĕ батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем оборонăра тăрса хĕрÿллĕн çапăçнă. Хулан заводсен пайĕнче противник пĕр пехотнăй дивизи тата темиçе вуншар танк наступление кĕртсе янă. Нимĕçсем пирĕн оборона рубежĕсене пĕр вăхăтрах темиçе тĕлтен те атакăланă. Хулана хÿтĕлекенсем тăшманăн атакисене вăйлăн сирсе тăнă, хăйсен позицийĕсенчен чакман. Гитлеровецсем пĕр участокра кăна, йывăр çухатусем тÿссе, пĕр 50—100 метр малалла куçма пултарнă, унта вĕсем пĕр заводăн хĕррине кĕрсе кайнă. Çав çапăçусенче, туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1.500 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсен 11 танкне, вăл шутра 3 йывăр танк, персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Унсăр пуçне тата пирĕн артиллеристсемпе гвардеец-минометчиксем пенипе противникăн пехотине пĕр полка çити тата войскăсем турттарса пыракан 200 автомашинине сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн летчиксемпе зенитчиксем нимĕçсен 23 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем хăйсем йышăнса тăракан рубежсене çирĕплетнĕ тата разведка тунă. Артиллеристсем, минометчиксем тата снайперсем пенипе çак иртнĕ виçĕ кун хушшинче, пĕр участокра кăна илсен те, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ, 60 станковăй пулемет, 15 миномет, 2 оруди, тата 30 автомашина пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра гитлеровецсем, нимĕнле йывăр çухатусем умĕнче те чарăнса тămасăр, çак кунсенче пирĕн часть тытса илнĕ халăх пурăнакан пĕр пункта каялла туртса илессишĕн çапăçаççĕ. Пирĕн боецсем хăйсен позицийĕсене çирĕп тытса тăраççĕ. Çав участокра хартласа тăракан вут-çулăмпа тата контратакăсем туса кункаçиччен румынсен пехотин пĕр батальонне аркатса тăкнă, нимĕçсен 8 танкне тата 2 бронемашинине пĕтернĕ.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем активлăн çапăçнă. Н-ски соединенин боецĕсем тăшмана çирĕплетнĕ рубежран çапса кăларнă, нимĕçсен пехотине виçĕ ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ. 9 пулемет, 60 автомат, винтовкăсем тата боеприпассем нумай тытса илнĕ. Тепĕр участокра гвардеец-казаксем 200 гитлеровеца çити тураса тăкнă. Федяков юлташ командир пулса ертсе пыракан артиллеристсем тăшманăн пехотине икĕ ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ, 6 автомашина çĕмĕрсе тăкнă, противникăн минометсен 2 батарейине тата артиллерин пĕр батарейине пусарса лартнă.

* * *

Нальчик районĕнче çаплах хаяр çапăçусем пынă. Пирĕн чаçсем наступлени тăвакан противника хирĕç хаяррăн тăнă, ăна пысăк çухатусем кÿнĕ. Пирĕн артиллеристсемпе бронебойщиксем нимĕçсен 18 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче противникăн пехоти танксем пулăшнипе пирĕн позицисене çĕнĕрен атакăланă. Андреев юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделенисем нимĕçсен пур атакисене те сирсе пăрахнă. Çав участокра виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 12 танкне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ, противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1.500 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ е амантнă.

* * *

Смоленск облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансем засадăра ларса тăватă кун хушшинче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 148 çынна вĕлернĕ, штурмовой отрядăн офицерне тыткăна илнĕ тата груз турттарса пыракан 16 автомашинăна сирпĕнтерсе янă. Çав отрядри партизансен ушкăнĕ противникăн чугунçул тăрăх войскăсем турттарса пыракан эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Смоленск партизанĕсен тепĕр ушкăнĕ нимĕçсен фашистла оккупанчĕсен икĕ эшелонне крушени тунă. Чĕрĕ вăй турттарса пыракан 4 вагон, артиллери тиенĕ 7 платформа тата вăрçă хатĕрĕсем турттарса пыракан 15 вагона çĕмĕрнĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Курск облаçĕнчи Ольховатка ялĕнче калама çук хăрушă ĕçсем тунă. Октябрĕн 2-мĕшĕнче нимĕçсем ирсĕрĕсем ялти арçынсене 14 çултан пуçласа 60 çула çитиччен пурне те персе пăрахнă. Хĕрарăмсемпе пĕчĕк ачасене концентрациллĕ лагере хăваласа кайнă. Хресченсен пĕтĕм пурлăхне çаратса тухсан, нимĕçсен сынçненĕсем çав Ольховаткăна çунтарса янă.

### Октябрĕн 30-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Октябрĕн 30-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче, **Туапсерен** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата **Нальчик** районĕнче çапăçнă.

Ытти фронтсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Сталинград районĕнче хаяр çапăçусем малалла пулса пынă. Хула оборонин участокĕсенчен пĕринче нимĕç пехотин батальонĕ, танксем пулăшса пынипе, наступлени пуçласа янă. Горохов юлташ командир пулса ертсе пыракан боецсем противникăн пур атакисене те сирсе пăрахнă, вĕсем хăйсен позицийĕсене çирĕп тытса тăраççĕ. Заводсен районĕнче нимĕçсен йышлă танкĕсем пирĕн позицисене атакăланă. Лучинов юлташ командир пулса тăракан чаçри танкистсем тăшман машинисен çулне пÿлнĕ. Голышев лейтенант хăйĕн танкĕпе мĕнпур хăвăртлăхпа пырса противника контратакăланă та хăйĕн машинипе нимĕçсен танкне çапса çĕмĕрнĕ. Голышев хыççăн пирĕн ытти машинăсем те малалла çиçĕмле ыткăннă. Нимĕçсем совет танкĕсем хĕснине тÿссе тăрайман, вĕсен йышĕ пирĕннинчен йышлăрах пулнă пулин те, каялла чакнă. Çав çапăçура совет танкисчĕсем нимĕçсен 16 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн подразделени çĕрле противникăн оборони ăшне кĕрсе кайнă. Хăюллă боецсем окопсене гранатăсем вăркăнтарнă, унтан вара нимĕçсемпе штык вĕççĕн тăрса çапăçма тытăннă. 130 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. 2 противотанковăй оруди, 5 пулемет тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Тепĕр участокра совет артиллерисчĕсем противникăн атакăна тухма хатĕрленнĕ пехотин пысăк ушкăнне сапаласа янă.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем активлăн çапăçнă. Н-ски чаçăн боецĕсем, вăйлă çапăçура тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе, пĕр высотана йышăнса илнĕ. Çав çапăçура тăшманăн пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем—8 пулемет, 3 миномет, винтовкăсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ. Пирĕн зенитчиксем нимĕçсен 3 истребительне персе антарнă.

* * *

Нальчик районĕнче пирĕн войскăсем противникăн наступлени тăвакан танкĕсемпе пехотине хирĕç кĕрешнĕ. Участоксенчен пĕринче тăшман пирĕн подразделенисене хĕсме пултарнă. Тепĕр участокра Н-ски чаçăн артиллерисчĕсем нимĕçсен 3 танкне тата войскăсемпе боеприпассем турттарса пыракан 15 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фронтĕнче капитан Бобрыкин юлташ командир пулса ертсе пыракан отряд нимĕçсем йышăннă халăх пурăнакан пункта çĕмĕрсе кĕнĕ те унта 200 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ. Н-ски стрелковăй чаçăн снайперĕсем пĕр уйăх хушшинче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1.048 çынна пĕтерсе тăкнă. Гварди снайперĕ красноармеец Абдыбеков юлташ 125 нимĕçе, гвардин ефрейторĕ Мадаминов юлташ—84 нимĕçе, Ертанов юлташ—65 нимĕçе, Неспубеков юлташ 43 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Белорусси партизанĕсен отрячĕ, оккупантсемпе çĕрле çапăçса, автоматсенчен персе нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Партизансен тепĕр отрядне хирĕç гитлеровецсем 600 кавалеристран тăракан карательнăй экспедици янă. Карательнăй отрядпа пуçланса кайнă çапăçура партизансем 150 нимĕçе вĕлернĕ, ыттисене сапаласа янă. Çав отрядри партизансен тепĕр группи противникăн чугунçул эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Паровоз тата 6 вагон çĕмĕрĕлнĕ, кунсăр пуçне 10 вагон стройран тухнă.

* * *

Брянск фронтĕнче Хĕрлĕ Çар енне нимĕçсен 4-мĕш танковăй дивизийĕнчи ефрейтор Вильгельм М. каçнă. Вăл çапла каласа панă: «Брянск таврашĕнче партизансем пире куллен-кунах тапăнаççĕ. Эпĕ чаçа ларса килекен поезд крушени тÿсрĕ. Паровоз тата 5 вагон çĕмĕрĕлчĕç. Çав катастрофăра нумай салтаксем пĕтрĕç».

* * *

Германин юстици ĕçĕсен çĕнĕ министрĕ, палач фон Тирак Германи çĕршывĕнче кирек мĕнле кăмăлсăрлăх палăрнине те çавтери тискеррĕн пусарса пырать. Вăрçă тата фашистла режим пирки кăмăлсăр пулнине палăртакан çынсем тĕлĕшпе гитлерла суд машинин çавтери хаяр приговорсем куллен пиншер йышăнать.

Октябрĕн малтанхи çуруйăхĕнче кăна Мюнхенри судсем, «Германи çĕнтерессине ĕненменнишĕн» çынсене каторгăллă ĕçе ямалла туса, 200 приговор ытла йышăннă. Гамбургра юлашки вăхăтра 600 рабочине ытла арестлесе тĕрмесене е концентрациллĕ лагерьсене ăсатнă.

## *Танксен колоннисене тума*

СЕНТЕРВАРРИ, октябрĕн 29-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тумашкăн укçа-тенкĕ пухма чĕнсе калани çине районри колхозниксем ĕçлĕн ответлеççĕ. Çав чĕнĕве пысăк хавхаланупа сÿтсе-явса, танксен колоннине тума çийĕнчех укçа-тенкĕ хываççĕ.

Водолеево ялсовечĕн активĕ çак ыйтăва сÿтсе-явнă хыççăн Еметкино колхоз председателĕ Крупнова, Водолеево колхоз председателĕ Филиппов юлташсем пиншер тенкĕ хывреç. Пустынькасси колхозĕн председателĕ Яковлев юлташ хăех 1.500 тенкĕ пачĕ, колхоз бригадирĕсем—Созонов, Рыжова, колхоз счетовочĕсем — Афанасьева, Крупнова юлташсем танксен колоннине тума 500-шер тенкĕ хывреç. Водолеево ялсоветĕн активĕ 8.200 тенкĕ пухса пачĕ.

Аслă Шигаево колхозĕн активĕ танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 2.700 тенкĕ хывре, колхозри комсомол организацийĕн секретарĕ Иванов юлташ 300 тенкĕ, колхозăн счетовочĕ Миронов, колхозри агроном Офицеров юлташсем 300-шер тенкĕ пачĕç.

Çавăн пекех Астакасси ялсоветне кĕрекен «Большевик» колхоз членĕсем те танксен колоннине тума укçа-тенкĕ активлăн хываççĕ. Отечественнăй вăрçă инвалиĕчĕ И. Львов юлташ 500 тенкĕ, фронтовик арăмĕ, колхозри свинарка П. Харитонова юлташ 250 тенкĕ, колхоз бригадирĕ Тихонов юлташ 250 тенкĕ хывреç. Кĕске вăхăт хушшинчех «Большевик» колхозра танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 18.000 тенкĕ пухнă.

Танксен колоннине тума укçа-тенкĕ пухасси хулари рабочисемпе служащисем тата студентсем хушшинче те ăнăçлăн пулса пырать. Вăрман ĕç техникумĕнче вĕренекен студентсем танксен колоннине тума 2.000 тенкĕ, «Винпром» заводра тата судоверфьре ĕçлекен рабочисемпе служащисем çак ĕçе валли хăйсен икĕ кунхи ĕç укçине пама пулнă.

**К. РОСТОВЦЕВ.**

* * *

ЙĔПРЕÇ, октябрĕн 29-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Танксен «Тракторист Чувашии» ятлă колоннине тума МТС коллективĕ пурĕ 28.700 тенкĕ укçа пухнă. Тракторсен 9-мĕш номерлĕ бригади (бригадирĕ Иванов юлташ) çак ĕç валли 4 пин тенкĕ, иккĕмĕш номерлĕ бригада (бригадирĕ Ильин юлташ)—1.600 тенкĕ пухнă.

## Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

### Чугунçул валли—вутă

### Çĕнĕ обязательствăсем илчĕç

ЙĔПРЕÇ. Октябрьти революци XXV çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, «Тымар» колхозри мастерăн участокĕ пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Çак участок чугунçул валли вутă хатĕрлесе памалли задание касас енĕпе 112 процент, турттарас енĕпе 101 процент тултарнă. Участокра ĕçлекен колхозсенчен çурри ытла хăйсен планĕсене иртерсе тултарнă. Уйрăмах «Красный водник», «Правда», «Заря» колхозсем лайăх ĕçлеççĕ.

Пухура малта пыракан стахановецсем хăйсен ĕçри опычĕсемпе малашне мĕнле ĕçлемелли çинчен тухса калареç.

— Вăрçă вăхăчĕ пире фронтри пек ĕçлеме хушать,—тет паллă стахановец В. Чураков юлташ.—Хамăрăн вăйсене шеллесе тămасăр ĕçлесе, ирсĕр тăшмана çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшас пулать. Пире кунта чи ответлă участока—чугунçул валли вутă хатĕрлесе пама тăратнă. Çакă вăл фронтрипе пĕрех шутланать. Çавăнпа та пирĕн ĕçлессе те фронтри пек ĕçлесе, поездсене пĕр чарăнмасăр çÿретме вутă çителĕклĕ хатĕрлесе памалла. Эпĕ çавăн пек ĕçлетĕп те ĕнтĕ. Манăн 5 уйăхри задани тăрăх 260 кубометр вутă касса хатĕрлемеллеччĕ. Эпĕ çав задание срокчен — икĕ уйăхрах пурнăçларăм, паянхи куна 387 кубометр вутă касса хатĕрлерĕм. Манăн çав çитĕнÿпе лăпланса ларма шухăш çук, эпĕ татах та лайăхрах ĕçлесшĕн.

Василий Чураковăн чаплă çитĕнĕвĕсем куç умĕнчех. Вăл хăйĕн тухăçлă ĕçне пула ĕç укçи те сахал мар илет. Август уйăхĕнче вăл 1.200 тенкĕ, сентябрьте 1.350 тенкĕ, октябрĕн малтанхи çуруйăхĕнче кăна 690 тенкĕ ĕçлесе илме пултарнă. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна премишĕпе 20 метр мануфактура т. ыт. япаласем те панă.

Çавăн пекех стахановец А. Аксянов (Вăтаялĕнчен), стахановкăсем А. Павловăпа («Комбайн» колхозран), А. Петаева («Заря» колхозран) тухса калареç. Вĕсем кашниех хăйсене панă заданисене срокчен 120—140 процент тултарнă.

Стахановецсем Октябрь уявĕ ячĕпе хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. В. Чураков, А. Аксянов, А. Павлова, А. Петаева юлташсем кашниех Октябрьти социализмлă Аслă революци XXV çул тултарнă тĕле тата 75-шер кубометр вутă касса хатĕрлеме пулчĕç. Хăйсем пек тума ытти рабочисемпе колхозниксене те чĕнчĕç. Вĕсен чĕнĕвне пурте пĕр кăмăллă пулса йышăнчĕç.

**Д. МИХАЙЛОВ.**

## Кадрсем хатĕрлеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). «Большевик» заводăн коллективĕ, Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, çак уйăхра çĕнĕрен 10 çынран кая мар квалификациллĕ рабочисем вĕрентсе хатĕрлеме обязательство илнĕ.

Çак обязательство ăнăçлăн пурнăçа кĕрет. Темиçе вуншар çын, квалификациллĕ рабочисем пулăшнипе, специальноçсем илме вĕренеççĕ. Вĕсем кашни цехра тенĕ пекех пур. Вĕсенчен чылайăшĕсем хăйсем тĕллĕн ĕçлеме вĕренсе çитрĕç те ĕнтĕ.

Ватă производственник Александр Клименко юлашки вăхăтра икĕ çын вĕрентсе хатĕрленĕ. Унăн ученикĕсем А. Самаринпа И. Журавлев халĕ хăйсем тĕллĕнех ĕçлеççĕ, нормăсене 125 процент тултараççĕ.

Смена мастерĕ коммунист Иван Горбунов кĕске вăхăт хушшинчех Е. Матвеева юлташа квалификаци илме пулăшрĕ. Матвеева техникăна хăвăрттăн вĕренсе çитрĕ, халĕ вăл выпарщица пулса ĕçлесе, сменăри нормăна ытлашшипех тултарать. Çакăн пекех производствăна пĕр уйăх каярах килсе кĕнĕ Лебедева юлташ та, стахановец Терентий Леонтьев вĕрентнипе, сложнăй профессипе ĕçлеме пуçларĕ.

Çĕнĕ кадрсем хатĕрлес ĕçе механически тата электроцехсенче те начар мар организациленĕ. Механически цехра акă токарьсемпе слесарьсем пулма 9 çынна вĕрентеççĕ, вĕсенчен 6-шĕ çак кунсенче хăйсем тĕллĕнех ĕçлеме тытăнчĕç. Электроцехра 3 çынна монтерсем пулма вĕрентсе хатĕрленĕ

## Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

### Сталинградшăн пыракан хаяр çапăçусем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Противник ĕнер атакăна вăйлă пехотнăй дивизи тата танксем [illegible] кĕртсе ячĕ. Тăшманăн 25—27 самолетран тăракан ушкăнĕсем пирĕн боевой йĕркесем çине [illegible] пыра-пыра тапăнчĕ. Малтанхи кунсенчи пекех, противник, [illegible] рубежа тытса илес-се, хăйĕн вăйĕсене завод районĕнче пухса пырать. Хула урамĕсенче хаяр çапăçусем хĕрсе кайнă, час-часах штыкпа тăрса тытăçсем пуçланать. Кĕрешӳ кашни çуртшăн кăна мар, çĕр лаптăкĕшĕн кашни метрĕшĕн пырать. [illegible] сухатусем тӳснине пăхмасăр, фашистсем малалла талпăнаççĕ. Совет воинĕсем тăшман хĕснине питĕх те çирĕппĕн чарса тăраççĕ.

Пирĕн артиллеристсемпе гвардеец-минометчиксем [illegible]. Ĕнерхи кун хушшинче, [illegible] минометсен батарейисемпе артиллери пере нимĕçсен пехотине 12 ротăна çити вĕлересе пĕтернĕ тата 30 танк тăрах пĕтерсе тăкнă. Совет артиллерийĕсем [illegible] пехотăн пĕр полкне çити тата противникăн войскăсене турттарса пыракан 200 автомашинине çапăласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

Вăйсем пирĕннисен нумай йышлăрах пулнă пирки кăна, гитлеровецсем пĕр участокра пирĕн оборона ăшне салăланса кĕме пултарнă. Тăшманăн унта сăрăхса кĕнĕ автоматчикĕсене совет боецĕсем пĕтерсе пыраççĕ.

Пирĕн авиаци малтанхи пекех активлăн кĕрешет. Штурмовиксен групписем противникăн войскисене тата транспорт колоннисене вăйлăн пыра-пыра çапнă. Истребительсем тăшманăн бомбардировщикĕсене хирĕç ăнăçлăн кĕрешнĕ. Сывлăшри çапăçусенче тата аэродромсем çинче фашистсен 15 самолетне пĕтерсе тăкнă.

Штурмовиксен звенин командирĕ Миронов лейтенант боевой задание пурнăçа кĕртнĕ чухне сывлăшри çапăçура аманнă пулнă. [illegible] пăхмасăр, вăл пысăк задание пурнăçа кĕртсе хăйĕн аэродромне [illegible] таврăннă. Тăшманăн чăçсене штурмланă чухне летчик-сержант Сердобойцев нимĕçсен зенитнăй артиллерийĕн вăйлă вучĕ тĕлне лекнĕ. Тăшман снарячĕ самолета сиенленĕ, летчика амантнă. Анчах Сердобойцев тăшмана малалла штурмланă. Аэродрома таврăннă чухне унăн самолетне «Мессершмитт»-сем тапăннă. Летчик вĕсене хирĕç çапăçса кĕнĕ, кунта тепĕр хут аманнă, анчах çапах та хăйĕн машинине базăна илсе çитернĕ.

Сталинградран кăнтăрарахра пирĕн войскăсем тăшмана хирĕç [illegible] тăраççĕ, час-часах контратакăна кусаççĕ. Кĕрешӳре хаяланнă красноармеецсем тăшманăн оборонине çĕмĕрсе, гитлеровецсен [illegible] укрепленийĕсене пĕтерсе-пĕтерсе тăкаççĕ. Стрелковăй чăсене тата артиллеристсене минометсен батарейисем пулăшса тăраççĕ. Вĕсем фашистсен рубежĕсем çине çĕрпер тонна металл тăкаççĕ.

Сталинграда хӳтĕлекенсен çирĕплĕхĕпе паттăрлăхĕ [illegible] пысăк. Рыбус лейтенантăн ротине хирĕç фашистсен пехотине танкĕсем пысăк ушкăнпе тапăнса пынă. [illegible] вăл малалла тухнă та тăшманăн ручной пулеметне вĕсен расчечĕсемпе пĕрлех пĕтерсе тăкнă. Кĕçĕн лейтенант Калинин, противотанковăй пăшалран персе, противникăн йывăр танкне çĕмĕрнĕ, снайпер винтовкинчен персе 13 фашиста вĕлернĕ.

**Н. МАРКОВСКИЙ.**

### Новороссийскран хĕвелтухăçнерехре

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Новороссийскран хĕвелтухăçнерехре фашистла войскăсем малаллах талпăнаççĕ. Пĕр участокра уйрăмах хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Унта совет войскисем юлашки виçĕ кун хушшинче тăшмана чарса лартма кăна мар, унăн оборони ăшне те савăлланса кĕме пултарнă. Н. высотана фашистсем иккĕмĕш талăк тенĕ пек ĕнтĕ атакăлаççĕ. Иртнĕ каç противник тата тепĕр атака тунă. Çапăçăва тăшман хăйĕн пехотин икĕ батальонне çити тата артиллерипе минометсем нумай кĕртсе янă. Анчах ку хутĕнче те высота пирĕннисен аллинчех юлнă.

Тепĕр участокра пирĕн чăçсем хăйсем йышăнса тăракан позицисене хăйсен аллинчех хăварса, малалла лайăхлатса пынă. Тинĕс пехотин пĕр подразделенийĕ, тăшмана çиçĕмле хăвăрттăн пырса çапса, тактика тĕлĕшĕнчен паха вырăн йышăнса тăракан высотана тытса илсе, ун çинче çирĕпленсе ларнă.

Пирĕн пĕр чăçăн наступленилле çапăçăвĕсем чылай пысăк ăнăçлăхсемпе вĕçленнĕ. Виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче çав часть тăшманăнне 9 пулемет, 50 автомат, 100 винтовка, боеприпассем, апат-çимĕç запасĕсем тытса илнĕ.

Тыткăна лекнĕ ефрейтор Пем çапла каласа панă: «Кавказри юлашки çапăçусенче пирĕн пĕрремĕш горно-егерски батальонра пĕр пин çынна яхăн вилсе тата аманса пĕтрĕ. Батальонри 1.400 салтакпа офицертан 400 çынран ытла мар тăрса юлчĕç».

**Н. ПУХОВ.**

### Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри çапăçусем кăнтăрла та, çĕрле те лăпланма пĕлмеççĕ. Пирĕн чăçсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе пырса, ăна пысăк çухатусем кӳреççĕ. Н-ски соединенин боецĕсем хаяррăн çапăçса, противника çирĕплетнĕ пĕр рубежран хĕссе кăларнă, темиçе çĕр гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ.

Нимĕçсен çавăрса илнĕ гарнизонĕсемпе подразделенийĕсене пирĕн боецсем ĕнер малалла пĕтерсе пынă. Тăшманăн çавăрса илнĕ пĕр батальонĕ парăнма килĕшмен пирки Павловский юлташ командир пулса ертсе пыракан гвардеецсем противникăн позицийĕсене атакăланă. Виçĕ сехет хушши пынă вăйлă çапăçура (кунта час-часах штык вĕççĕн тăрса çапăçнă) фашистсен батальонне пĕтĕмĕшпех вĕлерсе пĕтернĕ.

Нальчик районĕ патне тăшман резервсем куçарса пырать те вĕсене çийĕнчех çапăçăва кĕртет. Наступлени тăвакан противника хирĕç пирĕн чăçсем ĕнерхи пекех çирĕппĕн тăраççĕ, тăшмана пысăк çухатусем тӳстереççĕ. Пирĕн бронебойщиксем тата артиллеристсем нимĕçсен 18 танкне пĕтерсе тăкнă.

Совет авиацийĕ малалла активлăн кĕрешсе пынă, тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе техникине бомбăсемпе хăватлăн пыра-пыра çапнă. Ĕнер сывлăшри çапăçусенче фашистсен 4 самолетне персе антарнă, икĕ самолетне сиенленĕ. Кунсăр пуçне, зенитнăй артиллерирен персе тăшманăн пĕр бомбардировщикне пĕтерсе тăкнă.

**Г. ОШАРОВСКИЙ.**

## Чĕнетĕп

Мĕнпур халăхсене
Пăвса тăрасшăн,
Пĕтĕм тĕнче мулне
Хыпса çăтасшăн
Фашистсем çуйăхса
Сӳреççĕ чупса,
Çĕре хыпса-çăтса
Ярас пек пулса.

Сутă пурнăçлă
Çĕршыв хуçисем,
Ирĕклĕ кун-çула
Юратакансем,—
Вырăс, чăваш, тутар,
Харăссăн утар!
Фашистсене чăл-пар
Çапса аркатар!

Мухтавлă республик
Ĕç паттăрĕсем—
Октябрь çулăмпе
Çĕнтерекенсем,—
Украинец, белорусс,
Кабардин-балкар,
Çĕнтерӳ ялавне
Çӳлерех йăтар!

Тăванлă халăхсем—
Литовец, латыш,—
Сирĕн ĕçхалăхне
Пусмăрлать фашист.
Айтăр-ха, юлташсем,
Харăс çĕкленер,
Фашизм никĕсне
Çапса çĕмĕрер!

Кăркăс, туркмен, [illegible]
Мăкшăпа мари,
Пире совет çеç
Наци тивĕçне
Автономи пачĕ,
Пусмăртан çăлчĕ.
Фашистсене кăклар,
Совета сыхлар!

Таджик, узбек, удмурт,
Казахпа пушкăрт,
Пĕтĕмпех Октябрь
Çăлтăрсем эпĕр,
Граждăн прави пире
Пачĕ Хĕрлĕ Çар.
Аркатар Гитлера,
Паттăр çапăçар.

Карел, эстонец,
Армян, молдаван,—
Совет Союзĕнче,
Пурте пĕр тăван!
Ĕçхалăх тăшманне—
Гитлер-çăхана
Фашист лачакине—
Ярар çăвана.

Якут, бурят, монгол,
Ойротпа уйгур,—
Пурин те пирĕн халь
Конституци пур.
Октябрь тивлетне
Çирĕппĕн тытар,
Фашистсене вулкан
Çăварне ывăтар!

Совет анчах пирĕн
Тăван чĕлхене
Сутă кун-çул пачĕ,
Пусмăртан çăлчĕ.
Черкеспа осетин,
Аджар, ингушсем,—
Васкăр фашизма
Çапса аркатма!

Фашистсем пек çăткăн
Шовинистсенчен
Ĕмĕрех еврейсем
Тӳснĕ хĕн-хурсем.
Йĕксĕк гитлеризма
Çапса аркатма,
Еврейсем, эсир те
Çĕкленĕр пурте!

Нефть çулăмĕнче
Путасшăн тĕнче.
Кавказа фашистсем
Туртса илесшĕн.
Азербайджан, грузин,—
Союзри пур çын,
Республике вирлĕн —
Сыхлас пулать пирĕн.

Фашизма çапса
Аркантаракан,
Гитлера çăвана
Вăркăнтаракан
Мухтавлă ĕмĕрĕн
Хурçă крепоçĕ—
Сывă пултăр пирĕн
Паттăр Хĕрлĕ Çар!

Ĕçхалăхне чунтан
Сывăх куракан
Çĕнтерӳ çулĕпе
Ертсе пыракан
Чĕрĕлĕх çăл куçĕ,
Аслă çулпуçĕ
Сывă пултăр пирĕн
Иосиф Сталин!

**Н. И. ШЕЛЕБИ,**
**Чăвашсен халăх поэчĕ-орденоносец.**

### Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли—ăшă тумтирсем

СĔНТĔРВĂРРИ. Шуршăл ялсоветне кĕрекеп «Çĕнĕ ял» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли юлашки кунсенче 28 тир, 15 килограмм çăм, пĕр кĕрĕк, мулаххай, 3 алшăлли пухса пачĕç. М. Некрасов, П. Кондратьев, С. Софронов, Н. Иванов юлташсем пĕрер тир пачĕç.

Колхоз хăй енчен 12 килограмм çăм, пĕр кĕрĕк тата мулаххай пачĕ.

**И. ОСИПОВ.**

* * *

ТĂВАЙ. Элпуçĕнчи «КИМ» колхозра тăван çĕршывшăн геройла çапăçакан Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе аван организациленĕ. Ку тĕлĕшпе вырăнти комисси (председателĕ ВКП(б) членĕ А. Кондратьева юлташ) тăрăшса ĕçлет. Кашни бригада çумнех агитаторсем çирĕплетнĕ. Вĕсем колхозниксем ĕçленĕ çĕрте пулаççĕ, Хĕрлĕ Çар боецĕсен геройла ĕçĕсем çинчен каласа параççĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем кашниех фронтовиксене ăшă тумтирсем хатĕрлесе парас ĕçе хутшăнасшăн. Октябрĕн 25-мĕш тĕлне пурĕ 117 тир, 30 мăшăр çăм алшиш, 22 мăшăр носки, пĕр мăшăр çăматă, 4 килограмм çăм, 8 мăшăр тăла, 2 ăшă кĕпе, 42 алшăлли тата ытти япаласем те чылай пухнă.

Амалăхри «Горьковская Коммуна» колхоз членĕсем боецсем валли ăшă тумтирсем ытларах хатĕрлесе парассишĕн çине тăрса ĕçлеççĕ. Çак кунсенче вĕсем 27 тир, 7 килограмм çăм, 7 мăшăр çăматă, 12 мăшăр çăм носки, алшиш тата тăхăнмалли ăшă япаласем илме 275 тенкĕ укçа пухса панă. Чутейри «Сталь» колхоз членĕсем те ку ĕçе активлăн хутшăннă. Октябрĕн 20-мĕшне вĕсем пурĕ 63 тир, 6 килограмм çăм, 3 мăшăр çăматă, ăшă кĕпе, алшиш, енчĕксем чылай пухнă.

**В. ИЛЬИН.**

### ОБОРОНА ЗНАЧОКĔСЕМ ИЛЧĔÇ

СĔНТĔРВĂРРИ. Юртакасси тата Шуршăл ялсоветĕнчи çамрăксем çар ĕçне юратса вĕренеççĕ. А. Степанов, А. Анчунов, П. Стрелков, Е. Краснов юлташсем халĕ икшер оборона значокĕ илчĕç. Политикăллă пĕлӳлĕхе вĕсем пурте тăтăшах ӳстерсе пыраççĕ.

**Е. ЧЕЛЕВЕРОВ.**

## Ютçĕршывсенче

### Уилки тухса каланă пирки Хэлл тунă заявлени

ВАШИНГТОН, октябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Уилки хăйĕн сăмахĕнче Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тулашри политикине, уйрăмăнах США Инди ыйтăвне хутшăнассинчен пăрăннă пирки критикăлани çинчен пичет представителĕсем панă ыйтусене ответлесе, государственнăй секретарь Хэлл çапла каланă: нумаях пулмасть государственнăй департамент хăйĕн позицийĕ çинчен уçăмлăн пĕлтерчĕ, правительство Индири лару-тăру мĕнле аталанса пынине тĕплĕн сăнаса тăрать тата çак ыйту çине май килнĕ таран ытларах çаврăнса пăхма тăрăшать, тенĕ.

Хэлл малалла çакна палăртнă: вăл хăй çак ыйтăва тĕплĕн сӳтсе-явма пултараймасть, мĕншĕн тесен государственнăй департаментăн политикине критикăлакан çын тулашри политикăна пурнăçа кĕртсе пырассишĕн ответлă пулса тăракан официальнăй представительсенчен вăхăтлăха çӳлерех тăрать, — тенĕ. Хăшпĕр вăхăт хушши, кунта вăл хăй государственнăй секретарĕн постне йышăнса тăнă вăхăт та кĕрет, государственнăй департамент тулашри ĕçсем тĕлĕшпе инçетрине куракан политикăна пурнăçа кĕртсе пынă, тенĕ Хэлл. Çав политикăна вăл малалла та тытса пырасшăн. Хэлл: государственнăй департаментăн ĕçне малашне те критикăлас çуккине вăл пачах та кĕтмест, тенĕ. Анчах та государственнăй департаментăн ĕçĕ малалла аталанса пынă май çав критика сахалланĕ тесе тата туллирех информаци пичетлесе кăларсан ыйтусем уçăмларах курăнса тăракан пулĕç тесе шутлатăп, тенĕ вăл.

### Чили парламенчĕн специальнăй сессийĕ пухăнать

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: питех те кирлĕ ыйтусене пăхса тухма ноябрĕн 15-мĕшĕнче Чили парламенчĕн специальнăй сессине пухаççĕ. Ютçĕршыв ĕçĕсен çĕнĕ министрĕ Фернандес хăй ноябрĕн пуçламăшĕнче тулашри лару-тăру пирки заявлени тума шутлани çинчен пĕлтернĕ.

Чили правительстви нумаях пулмасть Германи посольствине шифрланă передачăсемпе уçă курма чарнă пирки Германин Чилири послĕ ютçĕршыв ĕçĕсен министерне виççĕмĕш хут протест панă. Çавнашкал протестах Итали послĕ те икĕ хутчен панă.

### Лăпкă океан çинчи вăрçă

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: октябрĕн 26-мĕшĕнче Америка бомбардировщикĕсем истребительсем хӳтĕлесе пынипе Кыска утравĕ çинче (Алеутски утравсем) японецсен лагерĕн тата подводнăй лодкăсен базин районĕ çине 18 тонна бомба пăрахнă. Тепĕр кунне «вĕçекен крепость» йышши бомбардировщиксем Кыска утравне татах тапăннă, ун чухне вĕсем подводнăй лодкăсен бази çывăхне бомбăсем пăрахнă. Америка самолечĕсене зенитнăй артиллери пенĕ, анчах та японецсен авиацийĕ хирĕç тăни пулман. Чылай бомбăсем паллă тунă район çине ӳкнĕ. Мĕн пысăкĕш сиен тунине пĕлме май килмен.

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: Соломон утравĕсен секторĕнче октябрĕн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Америка войскисем Гвадалканар утравĕ çинче японецсен пысăк мар атакисене темиçе хутчен сирсе янă.

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс министерстви çапла пĕлтерет: октябрĕн 26-мĕшĕнче Стюарт утравĕсем çывăхĕнче (Соломон утравĕсенчен хĕвелтухăçнерехре) японецсен икĕ авианосецне, пĕр крейсерне тата пĕр линкорне сиенленĕ.

#### ЕГИПЕТРИ ÇАПĂÇУСЕМ

Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: Египет фронтĕнче çапăçусем малалла пулса пынă. Икĕ енчен те бронетанковăй вăйсем хушшинче пысăках мар тытăçусем пулса иртнĕ. Англи войскисем малтан йышăнса илнĕ позицисенчен противник вĕсене хĕссе кăларма пултарайман. Октябрĕн 25-мĕшĕнче 18 сехет ситиччен нимĕçсемпе итальянецсене 1.450 çынна тыткăна илнĕ. Октябрĕн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тата ĕнер кăнтăрла союзниксен авиацийĕ противникăн çапăçусем пыракан районри объекчĕсем çине вăйлăн пыра-пыра тапăннă. Çавăн пекех тăшман авиацийĕн активлăхĕ те ӳснĕ. Анчах Англи летчикĕсем, ăнăçлăн кĕрешсе, тăшманăнне 15 самолетран кая мар персе антарнă тата ытти нумай самолетсене сиенленĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Египет фронтĕнчи çапăçусене союзниксен пехотнăй дивизийĕсем хутшăнаççĕ. Фронт линийĕнчен хĕвеланăç еннерехре, Эль-Аламея патĕнче, танксен çапăçăвĕсем пыраççĕ. Минăсем хурса тухнă вырăнсем урлă уçнă çулпа малалла куçакан 8-мĕш çарăн йывăр танкĕсене тытса чарас тесе противник танксене хирĕç пемелли орудисем лартса тухнă.

АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, англичансем наступление бронетанковăй чăçсемпе мар пуçланă, вĕсем, танксене резервра хăварса, малтан çапăçăва пехотăна кĕртсе янă. Çав вăхăтрах пехотăн наступленине авиаци пулăшса тăнă. Çапăçăвăн иккĕмĕш тапхăрĕнче кăна, Англи войскисем хăйсем тытса илнĕ вырăнсенче, минăсем хурса тухнăскерсенче, çирĕпленсе ларсан, çапăçăва бронетанковăй вăйсене кĕртсе янă. (ТАСС).

ЛОНДОН, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС) Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕн паян кăларнă коммюникинче çапла каланă: октябрĕн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕннисем противникăн Англи позицийĕсене хирĕç тунă контратакине сирсе янă. Ĕнер бронетанковăй вăйсем темиçе хутчен тытăçса илнĕ. Противника çухатусем кӳнĕ.

Ĕнер англичансен авиацийĕ противникăн объекчĕсем çине час-часах вĕçевĕçе пырса вăйлăн тапăнса тăнă.

### Америка самолечĕсем Наварино патĕнче Итали суднисене тапăннă

ЛОНДОН, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Стамбулран çапла пĕлтерет: Америка самолечĕсем Грецире Наварино портне тапăннă. Противникăн виçĕ транспортнăй карапне тата тепĕр баржине вут хыпса илнĕ. Çав суднăсем Çурçĕр Африкăна Роммель войскисем валли подкреплени турттарса пынă пулнă. Итальянецсен хăшпĕр пĕчĕк пайĕсем кăна çырана тухма ĕлкĕрнĕ. Кунта вĕсене Греци патриочĕсем атакăласа пысăк çухатусем кӳнĕ.

### КВИСЛИНГЛА ПУÇЛĂХ САЛХУЛЛĂН ЙЫШĂННИ

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). «Афтенпостен» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, квислингла организацин Тронхеймри пуçлăхĕ Рогстад квислинговецсен Осло хулинче пулнă пухăвĕнче тухса каланă хăйĕн сăмахĕнче нимĕçсен оккупациллĕ влаçĕсем Тронхеймра тата ун таврашĕнчи районсенче мĕн пирки чрезвычайнăй положени туса хунин сăлтавĕсене кăтартса панă. Рогстад çакна йышăннă: квислинговецсем Норвегири халăх массисемпе калаçса татăлма тем пек тăрăшнă пулин те, çакă вăл намăсла путланса ларнă. «Чылайĕшĕсем, — тенĕ Рогстад,—пире ăнланса илме те тăрăшмарĕç, кун вырăнне вĕсем диверсиллĕ ĕçсемпе саботажсем туса пычĕç. Пирĕн мероприятисене хирĕç тăрасси вăйланса пынă пирки тата эпир асăрхаттарнине никам та итлемен пирки, норвежецсене ирĕксĕрех пирĕн: «чарăнăр»,тесе калама лекрĕ. Норвеги халăхĕ оккупантсене хирĕç тата вĕсен Норвегири пуканисене хирĕç кĕрешме çул тупнине Рогстад салхуллăн палăртнă. «Шалти фронтри кĕрешӳ, — тенĕ Рогстад,— ытларах та ытларах çивĕчленчĕ, пирĕн тăшмансем пирĕнпе татах та ытларах килĕшми пулчĕç. Тронхеймра 10 çынна персе пăрахни çинчен малтанласа пĕлтерни халăха çавтери хускатса ячĕ. Халăх пурнăçпа çырлахасшăн пулмарĕ».

«Мерзавецсем çавăн пек позици йышăннишĕн кам айăплă пулса тăни» çинчен нимĕç оккупанчĕсен квислингла лакейĕ Рогстад Норвеги интеллигенцийĕ çине уйрăмах хаяррăн тăрăннă. Норвеги интеллигенцийĕн «обществăри влиянийĕ ытлашши пысăк» тенĕ вăл.

### Пĕлтерӳ

Шупашкарти лектори çакна пĕлтерет: кăçалхи ноябрĕн 1-мĕшĕнче ВКП(б) Горкомĕн парткабинетĕнче черетлĕ лекцисем пулса иртеççĕ: «Вырăссен аслă полководецĕсем» текен 1-мĕш циклпа— «Димитрий Донской тата Куликово патĕнчи çапăçăвăн историллĕ вырăнĕ». Лекторĕ Л. А. Рассудов. Лекци 4 сехетре пуçланать.

«Вырăс халăхĕн аслă культурин представителĕсем» текен II-мĕш циклпа — «А. С. Пушкин—вырăссен гениллĕ поэчĕ тата патриочĕ». Лекторĕ С. В. Иванов. Лекци 5 сехет те 50 минутăра пуçланать. Лекцисене абонементсем тăрăх кĕмелле. Пĕрре кĕмелли билетăн хакĕ 1 тенкĕ.

**ЧАССР Наркомпросĕ çумĕнчи лекци бюровĕ.**

**Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

## Партин районсенчи тата хуласенчи комитечĕсен оргинструкторски отдел заведующийĕсен канашлăвĕ

ВКП(б) Обкомĕ çак кунсенче партин районсенчи тата хуласенчи комитечĕсен оргинструкторски отдел заведующийĕсен канашлăвне ирттерчĕ. Унта оргинструкторски отделсен ĕçĕсем çинчен Никитина (ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕ), Перлович (Етĕрне), Миронов (Комсомольски), Ласточкина (Елчĕк) юлташсем доклад туса пачĕç.

Вăрçă обстановки парти организацийĕсене халĕ массăсемпе таччăнрах çыхăнса ĕçлеме хушать. Парти ретне ӳстерес, çамрăк коммунистсене вĕрентсе çитĕнтерес, партиллĕ-политикăллă ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе халĕ нихăçанхинчен те тимлĕнрех ĕçлемелле. Ирсĕр тăшмана пĕтерме фронта вăйлăнрах пулăшнă çĕрте, чи малтанах, ВКП(б) членĕпе кандидачĕн пĕтĕм вăй-хăвата хумалла. Вĕсен производствăра ыттисенчен малта пырса, ĕççыннисен пĕтĕм массине тухăçлăн ĕçлеме мобилизацилемелле. Çакна май, паллах ĕнтĕ, партин хуласенчи тата районсенчи комитечĕсен оргинструкторски отделĕсен ĕçне халĕ темиçе хут вăйлатмалла. Апла пулин те, партин хăшпĕр райкомĕсемпе хула комитечĕсем çав отделсен ĕçне çӳлĕ пусăма лартас тĕлĕшпе çитĕлĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Хăшпĕр çĕрте çав отделсенче ĕçлеме çынсем тупса çитермен, хăшпĕр çĕрте çав отделсенче ĕçлекенсемпе тĕрĕс усă курмаççĕ. Оргинструкторски отделсем хăйсем те хăшпĕр чухне пуçламăш парторганизацисенче партиллĕ-политикăллă тата партиллĕ-организациллĕ ĕçсене тивĕçлипе туса пыраймаççĕ.

Докладсем хыççăн тухса каланă юлташсем хăйсен ĕçĕн опычĕпе паллаштарчĕç тата хăйсене интереслентерекен ыйтусем çинчен чарăнса тăчĕç.

Чумакова юлташ (Сĕнтĕрвăрри хули) районри парти организацийĕ парти ретне ӳстерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлени, парти ретне комсомолецсене сахал илни, ĕççынни депутачĕсен район тата хула совечĕсен исполкомĕсенчи партиллĕ группăсем çителĕксĕр ĕçлени çинчен чарăнса тăчĕ. Космачова юлташ (Улатăр хули) ВКП(б) хула комитечĕ çамрăк коммунистсене вĕрентсе çитĕнтерес ĕçе начар туса пынине, çавăн пирки стаж иртнĕ парти членĕсен кандидачĕсен хисепĕ 70 процента çитнине, ВКП(б) хула комитечĕн оргинструкторски отделĕ промышленность предприятийĕсенчи парти организацийĕсене ертсе пырас тĕлĕшпе сӳрĕккĕн ĕçленине палăртрĕ. Ильичева юлташ ВКП(б) Пăрачкав райкомĕ оргинструкторски отделăн инструкторĕсемпе тĕрĕс усă курманни, вĕсене ытларах хуçалăхлă ĕçсене явăçтарни çинчен калать.—Эпĕ хам,—тет вăл,—икĕ уйăх хушши «Передовик» колхозра командировкăра пултăм, ун чухне мана ВКП(б) райкомне çӳреме те чарнăччĕ.

— Эпир пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсем хушшинче ĕçлесси çине ытларах çаврăнса пăхатпăр,—тет Морозов юлташ (Чкаловски район). — Вĕсемпе тăтăшах инструкциллĕ канашлусем, семинарсем ирттеретпĕр, ĕçлеме вĕренетпĕр. Анчах ку ĕçе пирĕн татах вăйлатмалла-ха.

Семенов юлташ (Элĕк) колхозсенчи парторганизацисен йышне ӳстерес ыйтăва çивĕччĕн лартрĕ. ВКП(б) Центральный Комитечĕн оргинструкторски отделĕн ответлă организаторĕ Козлов юлташ хăйĕн сăмахĕнче канашлу участникĕсем умне практикăллă задачăсем кăларса тăратрĕ. ВКП(б) Обкомĕн оргинструкторски отделĕн заведующийĕ Талдыкин юлташ оргинструкторски отделсен ĕçĕнчи хăшпĕр çитменлĕхсем çинчен чарăнса тăчĕ.

Канашлура ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ тухса каларĕ.

— Тăшмана çĕнтерес тесен,—тет вăл,— пирĕн мĕнпур организацисене, чи малтанах, парти организацийĕсене вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек ĕçлеттермелле. Халĕ парти организацийĕсен ĕçри вырăнĕ тата вĕсен ĕçри ответлăхĕ нихăçанхинчен те вăйлăнрах ӳсрĕ. Çавăнпа парторганизацисен ĕçне вăйлатмалла, вĕсене партипе правительствăн задачисене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыма мобилизацилемелле. Парти членĕсемпе кандидачĕсем хушшинче ĕçлессине, партиллĕ-политикăллă ĕçе вăйлатассине, коммунистсене ĕçре тĕрĕс вырнаçтарса тухассине манмалла мар.

Чарыков юлташ канашлу участникĕсене пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсемпе вĕсен заместителĕсене пулăшу парас пирки уйрăмăнах тимлĕн ĕçлеме хушрĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕ ертсе пырас ĕçе вăрçă кунĕсенче хутшăннă, çавăнпа вĕсене ĕçлеме куллен вĕрентмелле. Хуçалăхлă ыйтусене сӳтсе-явма çеç мар, секретарьсене ĕçлеме вĕрентес тĕлĕшпе те канашлусемпе семинарсем ирттермелле. Пăрачкавпа Кувакино районĕсенче, сăмахран, кăçал çавăн пек семинарсем пĕре те пулман. Секретарь час-часах ĕç планне тума, парти пухăвĕсене хатĕрлесе ирттерме, протоколсем çырма пĕлмест. Оргинструкторски отделсен вĕсене çак ĕçсенче пулăшмалла та ĕнтĕ. Вĕсен парторганизацисен пурнăçĕпе куллен интересленмелле, хăйсене пулăшма штатра тăман инструкторсен активне явăçтармалла.

Чарыков юлташ ВКП(б) райкомĕсемпе хула комитечĕсем хăйсен инструкторсемпе тĕрĕс усă курманнине сивлерĕ. Инструкторăн парторганизацисенче пуринче те пулмалла. Унти партиллĕ ĕçе хуçалăхри ĕçсемпе çыхăнтарса туса пымалла.

Чарыков юлташ çавăн пекех парти ретне ӳстересси, парти организацисем комсомол организацийĕсене ертсе пырас ĕçе вăйлатасасси çинчен каларĕ. Вăл оргинструкторски отделсен заведующийĕсене ку таринччен пулнă çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме, партиллĕ-политикăллă тата партиллĕ-организациллĕ ĕçсене вăйлатса пыма чĕнчĕ.

**Тресту Чувашлесзаг требуются:**
для работы в Чебоксарах:
бухгалтер-ревизор, специалист лесозаготовок, экономист-статистик, шофер, машинистка и для работы в райлесзагах: Кувакинском, Комсомольском, Октябрьском—старшие бухгалтера.
С предложением обращаться: Чебоксары, Канашская, № 7, Чувашлесзаг.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОН СЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн —, 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 970

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.